АС ТӐВӐМ

# Юрӑ сӑмахӗсем манӑҫсан та... Анфиса Смелова аса килет

## Пултарулӑх ҫулӗн пуҫламӑшӗ

Артистсем хатӗрлекен тӑрӑхра ҫуралнӑ Анфиса Ивановна. Вӑл ҫитӗннӗ вӑхӑтра Ирҫе ялӗнче драма кружокӗ ӗҫленӗ. Пуҫламӑш классен вӗрентекенӗ Петр Васильев сцена ҫине тӗрлӗ спектакль кӑларма вӑй ҫитернӗ. «Айтар», «Судра», «Кай, кай Ивана»... ӗҫсемпе артистсем куракансене тӗлӗнтернӗ те, тыткӑнланӑ та. Анфиса Смеловӑпа Анатолий Большаков хӑйсен пурнӑҫне театрпа ҫыхӑнтарнӑ. Григорий Петров та, Галина Мурзина та, Станислав Яковлев та... ятарлӑ пӗлӳ илнӗ пулсассӑн ним мар пысӑк сцена ҫине тухма пултарнӑ. Вӗсем хӑйсемех ҫи-пуҫ ҫӗленӗ, декораци хатӗрленӗ.

1964 ҫулта Петр Васильев ертсе пыракан драма кружокне халӑх театрӗ ят пама палӑртнӑ. Анчах режиссер хытах чирленӗ те хаклавҫӑсене чӗнсе илеймен. Кайран, Петр Васильевич пурнӑҫран уйрӑлсан та, Ирҫесем нумай спектакль кӑтартнӑ.

## Ирҫе ялӗн мухтавӗ

Ҫав тӑрӑхри тавра пӗлӳ музейӗ ятлӑ-сумлӑ ентешсен кун-ҫулӗпе паллаштарать. Унта Анфиса Ивановна ҫинчен ҫырни те пур. «Шупашкарта пурӑннӑ чухне драма театрӗнчен тухма пӗлмен. Качча тухнӑ ялта Анфиса Смеловӑна курсан мӗнешкел савӑннӑччӗ. Шкула тӗл пулӑва чӗннӗ ӑна. Пӗрре чӑваш ҫи-пуҫӗн, тӗрӗ-эрешӗн хӑйне евӗрлӗхӗ ҫинчен каласа кӑтартнӑччӗ вӑл», – аса илет

Шупашкарти «Ҫӗнтерӳ» мемориал комплексӗнчи Ҫар Мухтавӗн монументчӗ патӗнче тӑратӑп. Ӑна 1980 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 9-мӗшӗнче уҫнӑ. Амӑшӗпе ҫалтак ҫӑнарӗ урлӑ Тӑван ҫӗр-шыв Аслӑ вӑрҫи вӑхӑтӗнчи паттӑрлӑха кӑтартнӑ. Ҫакӑнтах ҫӳнми ҫулӑм ялкӑшать. Ҫамрӑк мӑшӑр ҫӗнтерӳшӗн вӑй-халне, пурнӑҫне шеллемен йӑх-несӗле хисеплесе туйра палӑк умне чечек ҫыххисем хураҫҫи йӑлара. Монумент ҫинчи амӑшӗн ҫӑнарне Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисткине Анфиса Смеловӑна пӑхса ӑсталанине пӗлетӗр-и? Ун чухне скульптор ятарласа Мускава чӗнсе илнӗ ӑна. Ҫи-пуҫа театртан тата тавра пӗлӳ музейӗнчен илнӗ.



«Пӗрмай ҫӗклесе тӑнӑран алӑ ывӑннӑччӗ...» – каласа кӑтартнӑ вӑл кайран ӗҫтешӗсене. РФ халӑх артистки Нина Яковлева ҫав вӑхӑта аса илтерсе паллӑ ҫак вырӑнта ӑна ҫӑн ӳкерме палӑртнӑ, анчах шухӑшланине пурнӑҫа кӗртме ӗлкӗреймен. Анфиса Смеловӑн кун-ҫулӗ вӑхӑтсӑр татӑлчӗ. Пурӑннӑ пулсан ҫак кунсенче 75 ҫул тултаратчӗ вӑл.

Етӗрне районӗнчи Ирҫе хӗрӗ А.В.Луначарский ячӗллӗ Мускав патшалӑх театр искусствин институтӗнче вӗреннӗ, унтан К.В.Иванов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче 33 ҫул ӗҫленӗ. Унӑн сӑнарӗсем – Нонка Амӑшӗ /«Нонка юратӑвӗ», Г.Терентьев/, Зана /«Вӗр, вӑштӑр ҫил», Я.Райнис/, Лисук /«Вӗлле хурчӗ – ылтӑн хурт», В.Яковлев/, Маруҫ /«Юратупа кавӑн», И.Стаднюк/, Марийка /«Салтак арӑмӗ», Н.Анкилов/, Валерия /«Хӗвел ӳкнӗ хырлӑх», Л.Моисеев/, Улемпи /«Салтак амӑшӗ», В.Синичкин/, Пинерпи /«Айтар», П.Осипов/... – яланлӑхах куракансен асӗнче юлӗҫ. Сӑмах май, вӑл Николай Айзман ӗҫӗ тӑрӑх лартнӑ «Кай, кай Ивана» спектаклӗнчи Вӗҫелис сӑнарӗпе 24 ҫул /!/ сцена ҫине тухнӑ. Ҫак ӗҫпе артистсем нумай хулапа яла ҫитсе килнӗ. Кирек ӑҫта та тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йышӑннӑ ӑна.

чӗ. Камитре те, драмӑра та вылянӑ. Пирӗн репертуарта юрӑ-ташӑллӑ спектакль нумай. Вӗсенче кашниччех Анфиса Ивановнӑна роль панӑ. Турӑ ӑна тӗлӗнмелле сасӑ парнеленипе ҫыхӑнтарас килет ҫакна. Вӑл хӑватлӑ кӑна мар, тӗрӗс юрлама пӗлетчӗ, ыттисене ертсе пыратчӗ.

«Салтак арӑмӗ» спектакльте Марийкӑна вылятчӗ вӑл. Ҫӗпӗр авторӗ ҫак ӗҫе хӑй те килсе курнӑччӗ. Тӗп роле калӑплакана ҫав тери килӗштернӗччӗ хӑна. Ун чухне ырӑ та ӑшӑ сӑмахсем каласа хавхалантарса хӑварнӑччӗ.

Сцена ҫинче ыттисене хӗртсе яма пултарнипе палӑрса тӑратчӗ вӑл. Ҫамрӑксем те унран нумай вӗреннӗ. Тивӗҫлӗ канӑва тухсан театра тӑтӑш килетчӗ. Вӑл нихӑҫан та йышран айккинче юлман.

Малтан театрта 4 сасӑпа юрлаттӑмӑр. Ҫур ҫӗр иртсен те гастрольтен юрӑ шӑрантарса таврӑнаттӑмӑр. Кашниччех Анфиса Ивановна пуҫласа яратчӗ. Чӑвашла та, вырӑсла та ҫав тери хитре юрлатчӗ.

**Нина ГРИГОРЬЕВА, РФ халӑх артистки:**

– Мускаврах пӗр ҫемьери пек пурӑннӑ. Вӑл, манран ҫур ҫул маларах вӗренме кайнӑскер, алӑран ҫавӑтсах ҫӳретчӗ. Хӑйӗнчен ниҫта та хӑварман. «Лашипе тихи» тетчӗҫ пирӗн пирки. Пӗррехинче иксӗмӗр пахалӑхлӑ та хитре пӗрешкел сумка та илнӗччӗ.

Гастрольте арҫынсемпе танах волейболла, футболла вылятчӗ е пулӑ тытатчӗ. Вӑл вӑрҫӑннине те, нӑйкӑшнине те курман.